С(Чув)
В67
26951-чув

# МАРИЯ ВОЛКОВА

## САВĂСЕМ

* * *

ПĔРРЕ ИРТНĔ ВĂХĂТ
ТЕПРЕ ТАВРĂНМАСТЬ.
ПĔР ШУХĂШСĂР, ШУХĂ
ПУЛМА ЮРАМАСТЬ.

ЭЙ, ÇАМРĂКЛĂХ! ВĔÇСЕР
МАЛА ВĔÇСЕ ИРТ.
АН ПУЛ ЭСĔ ТĔЛСĔР,
ПУЛ ХУРÇĂ, ГРАНИТ!

Эп — юрату, ачашлăх, имену́,
Çăлкуç пек тăрă, Атăл пек асамлă.
Пытанчăк вăй манра сарать ейу́,
Хитре чечеклĕ улăхсем пек анлă.
Уç кантăкна! Сив уйăх пек ан лар.
Эп сан çу́çне сирсе арпаштарам-и?
Эс ăнсăртран çеç пăхса ил, вара
Чун канăçне манăçтарса ярам-и?..
Эс чупкалатăн кантăкна хупма,
Ятла-ятла хут листисем пухатăн.
Манатăн ту́рлетме çеç галстукна,
Тем çухатса, тем тавçăрса пăхатăн,—
Пăх çаврăнса самант ачалăхна!
Асил те кул, выля манпа пĕрле...
Уçам-и шăппăн-шăппăн алăкна,
Сан тĕлĕкне кĕрем-и сĕм-çĕрле?
Эп сан туту, куç харшисем çине
Хĕвел пулса у́кетĕп çут ирпе.
Сăнна тĕрлетĕп минтерру́н питне
Хам кăкăрти хĕвелĕн шевлипе.
Эп — тутлă хурăн çырлисен сĕткенĕ.
Эп — сан хĕвел, хăват, асам, шерпет;
Сив уйăх пек ларайман астивсен эс?
Ниçта та пурнăç çук эп çук çĕрте.

## ЭП ПУРНАТĂП ЙĂЛĂМРА

Эп пурнатăп йăлăмра.
Йăлăмра — тӳлек йăмра.

Ир те каç ларать унта
Çамрăк пулăç вăлтапа.
Пĕччен парăс пек, каçпа
Эп ишеп мĕнпур чунтан.
Пĕчĕкçеç утрав çине
Çитмелле ман, вăл — инçе.
Пулăç янă вăлтине,
Туртăнать хăй ман енне:
Те хăрать вăл путасран,
Авăрта çухаласран.
Тем юрлать вăл, шăхăрать
Шыв сассиллĕ шăплăхра.
Эп ишсе шăмпăлтатни —
Чунпа чун сăмах татни.
Каччă хăй те пăлханать,
Каччă темшĕн кулянать.
Çĕрлехи вут айккинче
Куç илмест утрав çинчен.
Шыв шавланă сулхăнта,
Шăпчăк савнă вырăнта
Манăçнă вăлта хулли,
Вылянмасть... Кĕмест пулли.
Юхăмран çав кукăра
Сулхăн варкăш хăпарать,
Çулăма варкăштарса,
Пулăçне шутлаттарать.
Ир-ха каччăн авланма,
Куç хывма утравăма.
Çеçкере эп. Вăл тин çеç
Çитĕнет-ха çип-çинçен.
Пĕчĕкçеççĕ киммĕме
Куç хывать те —именет.
Эп пĕлместĕп йăлăнма,
Эп пурнатăп йăлăмра.

## ВЕГА

Пӗр ҫӑлтӑр тӳпере ҫунать
Ыттисенчен кӑшт йӑмӑхса,
Сенкер. Ҫӑлкуҫ пек курӑнать—
Тӑранаймастӑп эп пӑхса!
Ах, Вега! Эп сан пек илемлӗ,
Сан пек сенкер таса пулсан,
Қам пӑхмӗ, кам савса иленмӗ,
Ҫынран эп пурӑнмастӑп уйрӑм...
Тен, шухӑшлатӑп тимлӗрех.
Тен, халӗ тин ҫакна эп туйрӑм:
Такамшӑн эпӗ те хитрех.
Е хам ҫитмен ҫӗре ҫитерӗп
Эп чун юратнӑ арҫына.
Е ӗмӗре пӗччен ирттерӗп
Бетховенла ҫуна-ҫуна.
Айван чух мӑшӑр пулаймарӑм,
Ҫулсем халь — витӗр ҫеҫкере.
Эп хӗр тасалӑхне упрарӑм
Элексенчен те ҫӳллӗрех!..
Эх, Вега! Хӗрлӗхӗм илемӗ,
Чечекӗ, ҫӑлтӑрӗ эс ман!
Ӑна кама савса пиллем эп
Вӑл ӗмӗрлӗх пӗрре пулсан?

## АН СИВĔН, САВНИ

Эс кайрăн ирпе тĕттĕмлех,
Хыçран çĕмĕрт тĕмĕ чĕтренчĕ.
Хыçран эп хăймарăм чĕнме,
Куçсем куççульпе тĕтреленчĕç.
Куççулĕ — хам айăпларан,

Ăна эп чарма пĕлеймерĕм.
Пăхмасăр çухалтăн куçран,
Каçар та пулин тееймерĕм.
Ман айăп, тен, айăп та мар,
Санран ытларах кĕтни çеçчĕ.
Мĕскершĕн эс пултăн хаяр?
Малтан сăлтавне пĕлмеллеччĕ.
Мĕн-ма хĕр чĕри çырла мар,
Çырла пулсан,—татнă та сутнă.
Пĕлмест вăл вутпа выляма.
Эс, теççĕ, халь урăх хĕр тупнă.
Мансан—манса кай. Çураçман.
Ман туйăм ытла та пытанчăк.
Эппин, эс мана юратман,
Çавна ăнланма пултарман-тăк.
Анчах пахчана таврăнсан,
Кас-кас çĕмĕртсем хускалсассăн,
Кĕтетĕп эс таврăнасса.
Кĕтмесĕр епле пурăнас ман?